Октябрĕн 14–25-мĕшĕсенче Пĕтĕм Раççейри халăх çыравĕ иртет.
Унта пурте хутшăнăр. Раççейшĕн кашни пĕлтерĕшлĕ!

Çĕнтерӳ çулĕ

1930 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчен тухать

электронлă адрес:
print@vurnar.cap.ru

Вăрнар район хаçачĕ

2010 çул
юпа/октябрь/ уйăхĕн
2-мĕшĕ
•
шăмат кун
•
117-118/10279/ №
•
Хакĕ ирĕклĕ

Сирĕн тĕслĕхлĕ ĕçĕрте – паянхи пурнăç тăнăçлăхĕ

Пĕтĕм тĕнчери ватă çынсен кунĕ умĕн ирттернĕ тĕл пулура район пуçлăхĕ Анатолий Кузьмин çак сăмахсемпе районти культурăпа кану центрне пухăннă кашни çынна тав турĕ

УЯВ

Залра – тĕрлĕ сферăра ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнисем: хăй вăхăтĕнче ял хуçалăхне, медицинăна, вĕрентĕве, промышленноçа, ытти отрасле çĕкленисем. Пултаруллă педагогсем йышлăн – Хирпуçĕнчи Ираида Павловна Феофанова, Енĕшри Виктор Нестерович Нестеров, Мăн Явăшри Владимир Иванович Толстов, Хапăсри Василий Сереевич Сергеев, ыттисем. Паллă агрономсен Кивçурт Енĕшри Николай Алексеевич Алексеевпа Вăрнарти Валерий Фалалеевич Ваганинăн *(сăн ӳкерчĕкре)* та аса илмелли нумай пулчĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин участникĕсем, ветеранĕсем, тыл ĕçченĕсем – речĕпе.

«Сирĕн пархатарлă ĕçĕр нихăçан та манăçа тухмĕ. Эсир – паянхи мирлĕ пурнăç никĕсне хывакансем, паянхи ăрăва çул кăтартса пыраканĕсем. Çĕре çити таймапуç!»– тав сăмахĕнче район пуçлăхĕ Анатолий Кузьмин аслă ăру тĕлĕшпе районта пурнăçланакан тĕллевлĕ программăсем çинче те чарăнса тăчĕ. Вăрçă вучĕ витĕр тухнă ветерансен, тăлăх салтак арăмĕсен, ку категорири ытти çынсен пурнăç условийĕсене лайăхлатассипе тĕллевлĕ ĕçленине палăртрĕ. Сертификатсемпе 80 ытла çынна хваттерсем туянма е çурт çĕклеме пулăшнă. Анатолий Иванович çакă пĕтĕмпех Раççей, республика правительствисем тăрăшнипе пулса пынине каларĕ.

Республикăн 90 çулхи аталанăвĕнче те вăрнарсен тӳпи пысăк. Районтан акă Социализмла Ĕç Геройĕсемех темиçен тухнă, наука кандидачĕсем, профессорсем, чылай отрасле ертсе пыракансем – çĕршер. «Сирĕн ырă ĕçе малалла тăсма паянхи ăрусен пĕтĕм май çителĕклĕ. Сирĕн ятăра çĕре ӳкерес марччĕ».

Тав сăмахĕсем хыççăн-хыççăн янăрарĕç. Район администрацийĕн вĕрентӳпе çамрăксен политикин пайĕн пуçлăхĕ Николай Иванов, районти ветерансен канашĕн председателĕ Александр Ильин, хĕрарăмсен канашĕн председателĕ Надежда Лукина ватă çынсен канлĕ пурнăçĕ пирĕнтен, эпир вĕсене хисеплеме пĕлнинчен килнине, вĕсен пурнăçне савăнăç кĕртессине мĕнпур вăя хывмаллине каларĕç.

Паянхи кун районта 10800-е яхăн пенсионер пурăнать. Çулсем иртнĕ пулин те вĕсенчен нумайăшĕ районăн обществăлла пурнăçне активлă хутшăнать. Артистсен йышĕнче те, спортсменсемпе ăстаçăсем хушшинче те аслă ăрурисене час-часах куратпăр. Вăрнарти 70-е çитнĕ Анатолий Иванов акă тепĕр çамрăкран та ирттерсе штангă йăтать. Георгий Никишов çăмăл атлетикăра та, йĕлтĕр спортĕнче те çивĕчлĕх кăтартать. Галина Степановăна та сывă пурнăç йĕркипе туслă пулни пурнăçне тăсма пулăшать, хĕллесерен ăна час-часах йĕлтĕр трасси çинче куратăн. Кĕçĕн Кипекри Аркадий Смирнов та спорт тĕнчин чи çывăх тусĕ. Вăл нумай çул физкультура учителĕнче тимленĕ. Унăн вĕренекенĕсенчен чылайăшĕ спорт мастерĕн ятне илнĕ, физкультура учителĕсенче тимлеççĕ.

Ал ăстисем тата? Поселокри Альбина Ивановăн тĕрленĕ Турăшĕсем кама тыткăнламĕç пулĕ? Мăн Явăшри Зоя Владимировăн тата Çĕньял Хапăсри Антонина Филимоновăн тĕрленĕ ал шăллийĕсем, тутрисемпе вырăн хатĕрĕсем те çулсеренех ал ăстисен куравĕнче паллă вырăн йышăнаççĕ. Кӳстӳмĕрти Иван Музяковпа Çĕньял Хапăсри Иван Абрамов йывăçран касса кăларнă япалисемпе тĕлĕнтереççĕ...

С.ЧИКМЯКОВА.

5 октября – День учителя!

Дорогие учителя, ветераны педагогического труда!

Сердечно поздравляю вас с профессиональным праздником – Днём учителя!

В этот день вся страна отдаёт дань уважения благодарному, нелёгкому труду учителя. Это единственная на свете профессия, которой каждый человек обязан своим социальным становлением. Мысленно не раз возвращаясь в школьные годы, все мы с особой теплотой и любовью вспоминаем своего первого учителя. Храним в душе уроки добра и красоты, справедливости и человечности.

Сегодня педагоги района находятся в центре общественной жизни, внедряют новые образовательные технологии, вкладывают знания и жизненный опыт в умы и души молодого поколения, учат своих воспитанников творчески мыслить, принимать решения.

Всем педагогам и работникам образования выражаю искреннюю признательность и благодарность за самоотверженный добросовестный труд, терпение и душевную щедрость в обучении и воспитании подрастающего поколения.

Желаю всем Вам творческих свершений, душевного тепла и благополучия, благодарных, талантливых учеников!

Н.ИВАНОВ,
начальник отдела образования и молодёжной политики администрации Вурнарского района.

Поздравляем!

За достигнутые успехи в научно-исследовательской работе Указом Президента Чувашии от 30 сентября 2010 года **МАЛИЦКОЙ Ирине Николаевне – учителю муниципального общеобразовательного учреждения «Вурнарская средняя общеобразовательная школа № 1»** – присвоено почетное звание **«ЗАСЛУЖЕННЫЙ РАБОТНИК ОБРАЗОВАНИЯ ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ».**

Хаçат юбилейĕ çывхарать

Асăрхарăр пулĕ: Вăрнар районĕн хаçачĕ тухма пуçланăранпа тепĕр уйăхран 80 çул çитет. Вулакансенчен çырусем кĕтетпĕр.

1. Ку вăхăтра хаçатăн мĕнле пулмалла? Кампа паллашас кăмăл пур? Мĕн çинчен çырмалла?

2. Сирĕн кун-çулăрти хаçатпа çыхăннă паллăрах самантсем. Асра юлнă авторсем, очерксем, фельетонсем, статьясем.

3. Район историйĕпе, çыннисемпе çыхăннă фотоӳкерчĕксем – киввисем те, хальхисем те пулччăр.

Çырусене пирĕн пата ноябрĕн 15-мĕшне çитерме тăрăшăр. Вулаканăмăрсене ăнăçу сунатпăр.

«Çĕнтерӳ çулĕ» хаçат редакцийĕ.

Пултарулăх çурчĕ çинчен мĕн пĕлетĕр?

Октябрь вĕçĕнче Вăрнарти ача-пăча пултарулăх çурчĕ хăйĕн 50 çулхи юбилейне паллă тăвать. Çавна май историне тĕплĕнрех çырас тĕллевпе учреждени администрацийĕ вулаканăмăрсенчен пулăшу кĕтет. Аса илӳсемпе, тĕрлĕ фактсемпе çыхăннă çырусене çак адреспа: Вăрнар пос., Ленин урамĕ, 54-мĕш çурт, ярса пама ыйтать. Вĕсене хаçат редакцине те çитерме юрать.

«Çĕнтерӳ çулĕ» хаçата 2011 çулăн пĕрремĕш çур çулĕ валли çырăнтарăс тапхăр пуçланчĕ

2011 çулхи январь–июнь уйăхĕсенче ăна почта урлă илсе тăма унченхи пекех 187 тенкĕ те 80 пус тӳлемелле пулать. Хаçата редакцие килсе илмелле те çырăнтараççĕ, хакĕ – 110 тенкĕ. «Çĕнтерӳ çулне» çырăннисем Вăрнар чиркĕвĕн прихучĕ кăларса тăракан «Георгиевский листок» хаçата малашне те тӳлевсĕр илсе тăрĕç.

«Çĕнтерӳ çулĕ» хаçатсăр ан юлăр. Юратнă хаçата çырăнăр, вулăр.

ÇАНТАЛĂК

	Вырсарни кун 3.10	Тунти кун 4.10	Ытлари кун 5.10	Юн кун 6.10
кăнтăрла	+5	+7	+8	+9
çĕрле	-2	-1	-1	+1

«Метеоновости» информаци агентствин информацийĕ тăрăх.

Лауреат

Тавтапуç сана, Вĕрентекен!
(Мĕльюн сăвăран).

Кӳршĕ килĕнче калаçкаласа ларатпăр. Юлташăм, Давыд Федорович Иванов, кун-çулĕн пусми тăрăх хăпарнă май, хăйне район аталанăвĕн паллă сыпăкĕсенче, чи йывăр картлашкисем çинче тĕрĕслерĕ. Республикăн тава тивĕçлĕ зоотехникĕ юлашкинчен Вăрнарти ял хуçалăх техникумĕн директорĕ пулчĕ.

– Чăваш АССР вĕрентĕвĕн ветеранĕ, чи аслăраххи, яшлăхне тата вăта çулĕсене Вăрнарта туптаса пиçĕхнĕ аксакал, хальхилле туллин калас-тăк, профессиллĕ вăтам пĕлӳ паракан «Вăрнарти ял хуçалăх техникумĕ» федераллă патшалăх учрежденийĕ, 90 çул тултарчĕ, – терĕ Давыд. – Техникумăн хальхи директорĕ Илья Анатольевич Арбузов хушнипе ĕнер ман пата хисеплĕ делегаци килсе кайрĕ. Мана килĕмрех чыслăх хăйăвне кăкăр урлă çыхрĕç, парнесемпе хавхалантарчĕç...

УЧИТЕЛЬ КУННЕ

Вĕсенчен сумлăраххи, хаклăраххи, ман шутпа, 280 страницăллă юбилей кĕнеки. Ăна ĕмĕр-ĕмĕре асăнмалăх шутласа кăларнă. Вăхăтлă, вырăнлă маçтăрланă. Пурнăç пултаруçи – этем. Çырулла палăкăн ылтăн çӳпçинче – Тăван Çĕршывăн Герой ячĕпе юлнă паттăрĕсем, ăсчахсем – паллă ученăйсем, производствăн чаплă организаторĕсем, вĕрентӳпе воспитани ĕçĕн таланчĕсем...

– Ак çак Михайловсем çинчен кĕнеке çырма та пулать, – терĕ Давыд Федорович. – Мира Александровна техникумра сатур ĕçлени хĕрĕх çул тултарчĕ. Хăй вара унчченхиллех маххă паман çивĕч хĕрарăм. Иртнĕ вĕренӳ çулĕн кăтартăвĕсене кура тата техникум юбилейне уявланă май ăна лауреат ячĕпе чысланă. Палăртас килет, Михайловсем – алăран алă пултарулла пĕрле ĕçленĕ мăшăр. Çирĕп çынсем. Чун-чĕре ăшшине, вăйхалне, вĕрентӳçĕ ăсталăхне пĕтĕмпех çамрăк ăрăва, ялти кадрсене пилленĕ.

Коллегăсен хаклавĕ интереслĕ те пĕлтерĕшлĕ. «Мира Александровна, – асилет юлташăм, – вĕренӳ çулĕ валли планпа методика документчĕсене ялан маларах тата питĕ тимлĕ хатĕрлетчĕ. Оперативлă тишкерӳ-анализ тума маçтăрччĕ. Вăл хăйне çирĕплетсе панă уйрăмсенчи вĕрентӳпе воспитани процесне куç умĕнче çивчĕ тытнă, ăсталăхне çĕнетсе, пуянлатса тăрса йĕркеленĕ. Çамрăк преподавательсем, класс руководителĕсем унăн опытĕнчен ыррине пайтах туяннă».

Н.Ф.Храмов 1980–1983 çулсенче техникум директорĕнче ĕçлерĕ. Кайран шкулта пĕрле пултăмăр. Вăл учительсене ыррăн сĕнсе астутарнă сăмахсем манăçмаççĕ: «Техникума çаврăнса тухас-тăк, пĕрре те пулин Мира Александровна Михайлова урокне кĕрсе курăрха, – тетчĕ. – Вăт учитель! Ăса хывнисĕр пуçне хушма нумай материалпа тулăх усă курать. Вăл тăнлантарни идейăпа теори тата методика тĕлĕшĕнчен тачĕ та çыпăçуллă. Вĕренекене пĕлӳ картине илĕртме, кашнинех унăн шайне пăхса ĕç хушма ăслай тупать».

Николай Федоровичăн мăшăрĕ Лидия Александровна Храмова 26 çул хушши Михайловсемпе пĕр вăхăтра ĕçленĕ. «Вĕсен çынлăхĕ, вашаватлăхĕ, татулăхĕ вăйлă, – терĕ вăл. – Çамрăккисене те, ваттисене те тарават. Чыслă, совĕçлĕ, тивĕçлĕ çынсем. Шутсăр ĕçчен çемье. Мира Александровнан эрудицийĕ анлă. Вăл ĕмĕрĕ тăршшĕпех вĕренӳпе, вĕрентӳпе киленнĕ. Предмет тĕшшине тарăнран шĕкĕлчет. Хăй шăпин çул-йĕрне Турă халалĕпе тупнă».

Лауреата ку ятпа Вăрнартан чи маларах саламлаканĕ Владимир Александрович Александров пулнă-мĕн. 80-мĕш çулсен варринче вĕсем техникумра преподавательте çумăн тăрăшнă. Иксĕмĕр те пайтах юнашар тертленнĕ. Пульницара çывăххăн выртма килсе тухрĕ те, калаçса кайрăмăр. «Мира Александровна, – терĕ юлташăм, – хăйĕн тайăмĕпе, кăмăлĕн туртăмĕпе, призванийĕпе тесех палăртамха, – чăн-чăн педагог. Анчах эп, тĕллĕн пайăрлатса, ытларах каласшăн: психолог-çке вăл! Кирек кампа та пĕр чĕлхе тупать, кирек епле сехетĕнче те вĕренекенне сасă хăпартмасăр тыткăнпать. Сăпайлăхĕпе – черченкĕ. Çынна ырă суннийĕпе – хевтеллĕ. Студентсен, пĕр коллективри коллегăсен ӳсĕмлĕ утăмĕсемшĕн пĕрмай хыпаланатчĕ...»

Вĕрентӳçĕ – апла шыравçă! Кăштах та пулин М.Михайлова пултарулăхĕн кĕнекине сырăнса пынă сыпăксене илсе кăтартас килет. Алла, акă, ЧР Вĕрентӳпе çамрăксен политикин министерствин 2006 çулхи планĕ лекрĕ. Çĕнĕ Шупашкарта ирттернĕ наукăпа практика конференцине Вăрнарти ял хуçалăх техникумĕ активлă хутшăннă. Мира Александровна унта «Технологисен дисциплинисем» секцире хастар ĕçленĕ. Унăн эпизоотологи темипе хатĕрленĕ КВН вылявĕсене кинокамерăпа ӳкернĕ. Унăн пуçарăвĕпе тахçанах зоотехника пĕлĕвĕсен уйăхлăхне йăлана кĕртнĕ. Эпизоотологи урокĕсем валли «Иммунитет», «Эпизоотология с микробиологией», «Иммунизация сельхозживотных» темăсемпе вăл хатĕрленĕ методика ĕçĕсемпе студентсем тăванла мĕн пур институтра усă кураççĕ. Ку темăсемпе тата предметсемпе унăн автор программисем, практикăра усă курма тунă инструкципе технологи карттисем пур. «Мăйракаллă шуптра выльăхран юн илекен чи лайăх техник» смотр-конкурсенче унăн методикипе усă кураççĕ. Вулакансен чи кăсăклăрах конференцийĕсене М.Михайлова пуçарса хатĕрленипе иртернĕ. Вăл, çавăн пекех, усă урoксем йĕркелеме кăмăллать: атя, пурте тухса калаçчăр, тавлашчăр. Унăн тĕпчев ĕçĕсем пайтах, темисем пире, специалист маррисене, ăнланма хĕнтерех. Çавăнпа сĕнсе, веçех асăнса тухмастăп. «Ветеринар вăл – ăслă, тавçăруллă, чунлă çын», «Ырă усала пур-пĕр çĕнтерет!», «Юратăва упрама пĕлесчĕ!», «Çĕнтерӳ çулĕсене, çĕнтерӳçĕсене – тайма пуç!» – кун йышшисене тӳрех ăнланатпăр. Ку темăсен хăй çырнă сценарийĕсемпе Мира Александровна класс тулашĕнче нумай ĕçленĕ.

Ыйтрăм: «Хĕрĕх çулта çитмен район хăварман та пуль?» «Çитменни – юлман. Çĕршер яла çӳренĕ. Чылайăшĕнчен тав хучĕсемпе, парнесемпе таврăннă. Чи кирли – ял ачисене ялта пурнăç тума йыхравланă, çавăнпах вĕсене çине тăрсах ялти профессие вĕрентнĕ».

Ыйтрăм: «Мĕншĕн «пиçнĕ-пиçмен» Хусана тухса вĕçтертĕр?» «Мана, ял хĕрачкне, пĕчĕкрен «куршанак çыпçăннă». Хăвăрт «пиçнĕ» эпĕ. Атте, Александр Иванович Немилов, вăрçăран таврăнайман. Анне, Фекла Егоровна, мана шутсăр савса ӳстерчĕ. Тавах Турра – 94 çул пурăнчĕ. Мана, çум çакки евĕр, пĕр ĕçрен те хăвармарĕ. Çĕр – хурине, пурнăçра çутă хĕвел пуррине сăпкаран ансанах ăнлантăм. Уй-хир эртелĕнче вут кĕлти пек хĕрӳллĕ чупса çӳреттĕм. Юрланă, ташланă. Комсомол «çавра çилĕ» шутланнă. «Гвардеец» колхоз председателĕ, манăçман Евсей Дмитриевич Воробьев, мана тăван атте пек, кукаç пек юрататчĕ. Хусан çулне вăлах тĕллеттерчĕ-и тен?..»

Авшак Элменте çуралнă. Ялти, Ярмушкари шкулсем хыççăн Уйкас Юнтапара вăтам пĕлӳ пухнă. Хыççăнах Вăрнарти зооветтехникумăн 2-мĕш курсне пырса кĕнĕ. Пĕр çулталăк «Гвардеец» колхозра ветфельдшерта ĕçленĕ. 1963-мĕшĕнче Хусанти Н.Э.Бауман ячĕпе хисепленекен ветеринари институтĕнче вĕренме тытăннă. Хĕрлĕ дипломлă ветврач тăван колхозах таврăннă. «Василий Михайлович Ведин шыраса тупрĕ, – тет вăл. – Техникума преподавателе вырнаçма ӳкĕтлерĕ». Вара: 1969–1978, 1986–1989 çулсенче ветеринари дисциплинисен преподавателĕ, 1978–1986-мĕшсенче – ветеринари уйрăмĕсен заведующийĕ, 1989–1999-мĕшсенче – зоотехника уйрăмĕн, 1999–2004-мĕшсенче – технологи уйрăмĕн заведующийĕ.

Тепĕр хут калам-ха: вĕренме вăл нихăçан та пăрахман. Мăшăрĕпе иккĕшĕ те Мускаври К.И.Скрябин ячĕпе хисепленекен ветеринари академийĕн педагогика факультетне пĕтернĕ. Квалификаци шайне хăпартма Харькова, Ленинграда, Киева çаврăннă. База вырăнĕнчи Арзамасри совхоз-колледжра, Шупашкарти технологипе экономика колледжĕнче мĕн пур мероприятине хутшăннă. Ăна, опытлă, авторитетлă специалиста, час-часах йышăну комиссийĕн ответлă секретарьне суйланă.

Ыйтрăм: «Канăва Лауреат ячĕпе тухас килчĕ-и?» «Чи хăватлă спортсменсем те хăйсен вăхăтне палăртаççĕ. Илья Анатольевич асăрхаттарчĕ-ха: пур пĕр канăç кăтартмастпăр, терĕ. Хирĕçлеместĕп. Кирек хăш вăхăтра та, кирек кама та пулăшу кӳме хатĕр. Вăй пур. Кăмăл ирĕк. Эп хамăн ĕмĕтсене мĕн пурне пурнăça кĕртнĕ».

– Сăмахран, мĕнлисене?

– Шутсăрах учитель, преподаватель пулас килетчĕ! Артист пулас тесеттĕм: колхоз клубĕсенче кăнамар, академи театрĕсен сценисем çинче те юрларăм, ташларăм. Хальветерансен районти хорне çӳреме кăмăл пур. Тур çырнă мăшăрăма тĕлленеттĕм...

Тутарстанри Аксу чăвашĕпе Николай Алексеевичпа вĕсем институтра çума-çумăн чаплă вĕреннĕрен, пултарулăх ушкăнĕсенче юнашар çӳренĕрен çывăх паллашнă. Тупăнать-çке усалли: Çавалкаса техникум ачисемпе çĕр улми пуçтарма кайсан Николай Алексеевича тĕрме çыннисем хĕнесе сусăрлатнă. Кун пек чухне арăм упăшкишĕн мĕн таран чăтса тăрăшнине ăнланакан кăна ăнланать пуль. Вилĕмрен çăлăннăшăн Михайловсем паян кунччченех В.Аньева хирурга тав тăваççĕ. Вĕсем яланхиллех варлă та çирĕп. Пахча çимĕçĕнчен пуян. Ĕне тытаççĕ. Сысна самăртаççĕ.

Давыд Федорович çӳлерехре сăннă кĕнекене Мира Александровнан наградисем тăрăх йĕркелеме пулĕччĕ. Курăр-ха: пархатарлă мĕн чухлĕ хаклав! Акă, Хисеп грамотисем. Хусанти Советски комсомол райкомĕнчен – илемлĕх пултарулăхĕн смотрĕнче мала тухнăшăн (Мира Немилова ун чухне ветеринари институчĕн 2-мĕш курсĕнче вĕреннĕ). Совхоз-техникумран Елчĕк районĕнчи Ленин ячĕллĕ колхоза кайсан культура ушкăнĕпе пысăк пултарулăх кăтартнăшăн. 1980–1981 вĕренӳ çулĕнче ветеринари уйрăмĕ смотр-конкурсра ыттисем хушшинче мала ӳкнĕшĕн (директорпа пĕрле общество организацийĕсем алă пуснă). Тепĕр икĕ вĕренӳ çулĕнче те (1981–1982, 1982–1983) çавăншăнах – çавăн евĕрлĕ грамотăсем. 1982: ял хуçалăх ĕçченĕсен уявĕ ячĕпе пысăк çитĕнӳсем тунăшăн. 1982–1983: çамрăк ăрăва комсомолла, патриотла воспитани парас тĕлĕшрен хастар ĕçленĕшĕн (техникумри комсомол комитетĕнчен тата комсомол райкомĕнчен). Виçĕ хутчен – ЧР ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотипе: «Студентсене вĕренме йышăнассипе патшалăх планне ăнăçлă тултарнăшăн» (1983), «Ял хуçалăх кадрĕсем хатĕрлессипе нумай çул хушши тава тивĕçлĕ ĕçленĕшĕн» (1995), «Ял хуçалăх кадрĕсем хатĕрлессипе тунă çитĕнӳсемшĕн тата общество ĕçĕнчи активлăхĕшĕн» (2000). Сăмах çине калас-тăк, М.Михайлова ял советне те, район советне те депутата суйланнă. Çав çитĕнӳсемшĕнех ăна РФ ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотисемпе наградăланă (2000). 2004–2005: Вĕренӳ çулĕнче «Чи лайăх класс сехечĕ» смотр-конкурсра çĕнтернĕшĕн. 2006: студентсен наукăпа тĕпчев ĕçĕсене пултаруллă ертсе пынăшăн. Çак çулах – опытсен ĕçне йĕркелеме методика материалĕсем хатĕрленĕшĕн. Çак çулах – вĕренӳ групписем хушшинче ветеринари уйрăмĕн 325-мĕш ушкăнĕ мала тухнăшăн. 2008: Агропромышленность комплексĕ валли вăтам сыпăкри специалистсене хатĕрлес енĕпе нумай çул пархатарлă ĕçленĕшĕн. 1979 çулта «Социализмла ăмарту отличникĕ», 1986-мĕшĕнче «12-мĕш пилĕк çуллăх ударникĕ» паллăсене тивĕçнĕ. 1988–1989–1990 çулсенче ăна «Чи лайăх преподаватель» ятпа техникумри Хисеп Хăми çине кĕртнĕ, ку ята çирĕплетнĕ дипломсем панă. Мира Александровна вĕренекенĕсем – хăй пекех маттурсем: регионсем хушшинчи «Аслă Атăл яшлăхĕ» фестивале, районти, республикăри наукăпа практика конференцийĕсене, смотрсене, конкурссене хутшăнаççĕ, кипе парнесемпе таврăнаççĕ.

Вулакансене хаçатра иртнĕ шăмат кун пичетленнĕ «Молодой ученый из Вурнар» страницăпа тĕплĕнрех паллашма сĕнессĕм килет. Алексей – Михайловсен ывăлĕ. Епперех талант! (Вăрнар шкулĕнче ăна физикăпа математикăна Ю.Захаровпа В.Гурьева вĕрентнĕ). Наукăри çӳл тӳпене çамрăкла çав таран улăхса пынăшăн ашшĕ-амăшне тав тăвать. Ăшĕнче – вĕсен юнĕ-чунĕпе пил-халалĕ. Ăçтан-ха Америкăри çăтмаха сутăнайĕ? Виçĕ-тăватă Штатра илĕртсен те, Чул Хуланах таврăннă. Çĕр çинче Антейла Михайловсем пур чухне Чăваш енĕн, Раççейĕн малашлăхĕ çӳнместех.

М.ВАСИЛЬЕВ.

УЯВ ПОЧТИНЧЕН

Пĕччен юлас марччĕ

Чăваш Республикин сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану Министерствин халăхăн социаллă ыйтăвĕсене тивĕçтерекен «Вăрнарти центрĕ» республикăри патшалăх учрежденийĕ хăйĕн ĕçне пахалăхлă пурнăçласа пырать. Унăн йывăра кĕрсе ӳкнĕ ватăсемпе инвалидсен йывăрлăхпа çыхăннă ыйтăвĕсене татса пама тивет. Хăш-пĕрисем пĕр-пĕччен пурăнаççĕ, юнашар пĕр çывăх çын та çук.

Пĕччен пурăнакан ватăсем районта 600 ытла, килте пулăшу илекенсем 180-ăн. Вĕсене социаллă ĕçченсем асăрхаса тăраççĕ.

Тĕрлĕ сăлтава пула пĕччен тăрса юлнă ватă çын хăйне хӳтлĕхсĕр туять. Акă Аçăмçырминчи Галина Геннадьевна Андреева 75 çул тултарчĕ. Тивĕçлĕ канăва тухиччченех колхозра вăй хунă, çамрăк ачасене колхоз ĕçне хăнăхтарнă. Вăл яланах хисепре. Темле йывăр пулсан та эсир шанчăка, ĕненĕве ан çухатăр. Çӳл тӳпери хĕвел пурин çине те пĕрешкелех пăхать. Савăнăç куççулĕ, телейлĕ кулă кăна çиçтĕр сирĕн питĕрте, чунпа яланах çамрăк пулăр.

Уйкас Юнтапари Марийăпа Екатерина Тимофеевăсем иккĕшех кăштăртатса пурăнаççĕ. Мария кинеми 80 çултан иртнĕ, Екатерина кинеми унран 5 çул кĕçĕнрех. Ачи-пăчи, çемйи çук вĕсен. Мĕн тăвăн – шăпа çаппа... Пĕчĕклех йывăр ĕçе кӳлĕнме тивнĕ. Аслисемпе пĕр тан ĕçленĕ. Каярахпа, кăшт ураланcан, аппăшĕпе йăмăкĕ хăйсемех пӳрт çавăрма, хуралтăсем çĕнетме вăй çитернĕ. Ватă çынсен вăй-хал ĕлĕкхи мар ĕнтĕ, çапах иртнĕ çулччен ĕне те тытнă. Вĕсене кӳршисем пулăшсах, асăрхасах тăраççĕ. Ватăсем тав тăваççĕ, ыррине кăна калаççĕ.

Тепĕр чухне ватă çынпа чуна уçса калаçни те уншăн сиплĕ эмел пекех – чунра шанчăк, ĕмĕт çуралать. Акă çак ялти Алевтина Дмитриевăнах илер. Хăй те тивĕçлĕ канура ĕнтĕ, çапах та икĕ ватăна пăхса-асăрхаса тăрать, пĕччен пурăнакансене пулăшать. Ватăсем Алевтина Степановнана чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Çывăх çынсемсĕр тăрса юлнă, хăйсене пăхайман, тухса çӳреймен ватăсене юратма та пĕлмелле, вĕсен пурнăç çулне малалла тăсмалла, ĕмĕрĕсене пĕр хуйхăсăр, кӳренӳсĕр ирттерчĕр тесе тăрăшмалла.

Хисеплĕ ватăсем! Сире ырлăх-сывлăх, канлĕ ватлăх сунатпăр.

Е.ВИНОХОДОВА.

ХАЛĂХ ыйтать сĕнет канашлать

УСĂЛЛĂ КАНАШСЕН СТРАНИЦИ

ШУТА ИЛМЕ

Ура хырăмĕ мĕншĕн ыратать?

? Мĕнле чирпе чирленĕ чухне ура хырăмĕ ыратать-ха? Хăш тухтăр патне каймалла? Ура хырăмĕнчи тĕртемĕсен ыратăвне тĕрлĕ сăлтав пуçарать.

1. Ура вăйĕпе нумай ĕçлесен е ăна астумасăр ыраттарсан.

2. Ура хырăмĕ ыратни час-часах юн тымарĕсен чирĕпе çыхăннă. Çакă венăри юн юхасси пăсăлнипе, çавна май юн тымарĕсенчи юн пусăмĕ ÿснипе çыхăннă. Венăсенче юн хытса ларни нерв вĕçĕсене пырса тивет. Ыратни, урасем йывăрланни палăрать. Венăсем сарăлса тĕвĕленеççĕ (юн тымарĕсем чирленипе вĕсен клапанĕсем пăсăлса лайăх ĕçлемен чухне вырăнăн-вырăнăн тĕвĕленсе сарăлни).

3. Тăтăшах ларса е тăрса ĕçлесен те ура хырăмĕсем тÿсмелле мар ыратма пуçлаççĕ. Урара юн çывăрса ларнипе венăри тата артерири юн çаврăнăшĕсен ĕçĕ пăсăлать, кислород çитми пулать.

4. Тромбофлебит (вена стенкисем шыçнипе ун ăшĕнчи юн хытса ларни) чухне ура хырăмĕсем тăтăшах ыратаççĕ.

5. Артери атеросклерозĕ те ура хырăмĕсене ыраттарать. Атеросклероз час-часах чĕркуççи мышцисене шар кăтартать. Утнă чух пушшех те ыратать. Атеросклерозăн тĕп паллисенчен пĕри вăл – çултапăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те ура тĕпĕ сивĕ пулнине туйни.

Миозит чухне – мускулсем шыçсан – шĕпĕн курăкĕн сĕткенне е порошокне (1 пай) вазелинпа (4 пай) хутăштарса ыратакан вырăна сĕрмелле.

6. Çурăм шăммисене пĕр-пĕринпе çыхăнтарса тăракан çаврака кăмăрчаксен ĕçĕ пăсăлни урана пырса çапать. Ун чухне çурăм шăмми ыратмасан та пултарать. Купарча нерв шыççине (ишиас) пула та ура ыратма пултарать.

7. Периφери нервисен чирĕ те ура хырăмне шăнăр турттарать. Невралги чухне ыратни вăхăт-вăхăтпа, темиçе çеккунтран пуçласа темиçе минут таран тăсăлать.

8. Ура хырăмĕн мускулĕсем шыçĕнсан ыратăва чăтма питĕ йывăр. Миозита (мусул шыççи) тухтăрпа канашласа сиплемелле. Чылай чухне вăл хăнăхман çĕртен йывăр ĕçлесен е ура мускулне амантсан пулать. Уçă сурана инфекци лексен пÿрлĕ миозит аталанма пултарать. Ÿт температури хăпарать, сив чир ерет, ыратакан вырăн хăпарса хĕрелсе тухать.

9. Остеомиелит (шăмă сăсăлĕ (мими) шыççи) чухне те ура хырăмĕ питĕ хытă ыратать.

10. Вăйпа ĕçлесе ывăнсан та урана шăнăр туртать. Ыратни иртгĕр тесен канса лармалла е выртмалла, унтан мускула алăпа лайăх сăтăрса çемçетмелле.

11. Ĕнсене, мăя, çурăмăн аялти пайне, хул пуççи таврашĕнчи сыпăсене, кăкăра, пĕçĕсене фибромиалги сиенлет. Çак чир хĕрарăмсене ытларах çынăçать. Вăл йывăр ĕçленипе те, суранланнипе те, шăнса та пулать.

Чĕре те ватăлать

? **Çулсем иртнĕ май чĕре те ватăлать. Чĕре мышцисен ĕç-хĕлĕ япăхать, тĕрлĕ хускану тунă чухне çакă уйрăмах вăйлă палăрать. Чĕре вара организма юнпа япăх тивĕçтерме пуçлать, тĕртĕмсем кислород кирлĕ чухлĕ илеймеççĕ, çавна пулах аслă ÿсĕмрисем хăвăрт ывăнаççĕ. Унсăр пуçне ватăлнă май юн тымарĕсем те пиçĕлĕхне çухатаççĕ. Хускану тунă чухне вĕсенче юн пусăмĕ кĕтмен çĕртен ÿсет. Çавăнпах сывлăш пÿлĕнет, çывăрнă вăхăтра чĕре таппи улшăнать. Аслă ÿсĕмрисене тата вĕсен çывăх тăванĕсене мĕн сĕнме пулать-ха?**

Кирек епле ĕçре те ваттисен вăхăт-вăхăтран канмалла. Вĕсен организмĕ ĕçе япăх хăнăхать, çĕнĕлĕхсемпе улшăнусене йывăр йышăнать. Çавăнпа ывăнни, канăçсăрланни сиенлĕ. Кирек епле хускану та, тĕслĕхрен, тÿрех хăвăрт утни, тумланма пуçлани усă кÿмĕ.

Енчен те нумай вăхăт ларма е тăма тивет пулсан ура тăртанма, шыçма пуçлать. Кун пек чухне уран юн тымарĕсем те нуша кураççĕ. Кăштах та пулин çăмăллăх кÿрес тĕллевпе яка чăлхапа е бинтпа усă курма, вăхăт-вăхăтпа урана кĕлеткерен çÿлерех çĕклесе выртма (кашни 2–3 сехетрен 5–10-шар минут) май пур. «Велосипед» хускану туни те усăллă.

Аслă ÿсĕмрисен кĕтмен çĕртен сиксе тухнă лару-тăрура, тĕслĕхрен, хăрасан, пăшăрхансан, юн пусăмĕ питĕ хăвăрт ÿсме е чакма пултарать. Выртнă çĕртен сасартăк тăрса ларсан та çакнашкал тăтăшах пулать: юн пусăмĕ хăвăрт чакнипе пуç çаврăнать, тăн çухалма пултарать. Шăк хăвалакан е юн пусăмне чакаракан препаратсем ĕçекен чирлĕ çынсен ку паллăсем уйрăмах тăтăш тĕп пулаççĕ. Çавăнпа ватăсен ура çине майĕпен тăмалла.

Çывăрнă е нумай вăхăт выртнă хыççăн сасартăк тăни е ларни хăрушă: кравать, кресло е диван çинчен ÿкесси те пулĕ. Ура çине майĕпен, тапхăрăн-тапхăрăн тăмалла; кун пек чухне кĕлетке хусканăвĕсем улшăннине чĕре те, юн тымарĕсем те хăнăхса çитеççĕ.

Кукамайпа кукаçин кравачĕ е пуканĕ ура çине майĕпен тăма меллĕ пулмалла, мĕншĕн тесен шăпах сĕтелпукан майсăррине пула чылайăшĕ карт туртăнса çăкленет.

Чĕре ыратсан тухтăрсем катăркас (боярышник) çырлипе усă курма сĕнеççĕ. Вăл – чи витĕмлĕ эмелсенчен пĕри. 3 уйăха яхăн шĕвек е экстракт ĕçмелле. Шĕвеке çапла хатĕрлемелле: 1 апат кашăкĕ вĕтетнĕ çырлана тин вĕренĕ 1 стакан шывпа хушса термоса ямалла, çĕр каçармалла та сăрăхтармалла. Кунне 3 хут апатчен стаканăн 1/3 пайĕ чухлĕ ĕçмелле.

Чĕре аптратакансене хĕрлĕ тĕслĕ çи-пуç та, сĕтелпукан та, чÿрече карри те вырăнлă мар, мĕншĕн тесен вăл нерва тытăмне вĕчĕрхентерет, юн пусăмне хăпартать. Медиксем палăртнă тăрăх, хĕрлĕ тĕслĕ япала ытла нумайăн çынсене пăшăрхантарать, кăкăра хĕсет. Тĕпчев ĕçĕсен пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх сарă тĕслĕ пÿлĕмре ларакан çыннăн чĕре таппи – виçеллĕ шайра, хĕрлинче вара – тăтăшланать. Хĕрлĕ тĕс халтан кайнă çынна тата ытларах ывăнтарать. Унсăр пуçне куçа йăмăхтаракан хĕрлĕ тĕс куç çивĕчлĕхне чакарать, пуçа ыраттарать, кăмăла пăтрататъ.

КИРЛĔ ПУЛĔ

Ÿсĕрĕлес мар тесен

Ÿсĕрĕлес мар тесен 1 апат кашăкĕ ахаль эрĕме тин вĕретнĕ пĕр стакан шыва ярса сехет лартмалла. Ăна эрех ĕçес умĕн ĕçмелле.

Эрĕм витĕмĕ 6 сехете яхăн пырать. Ахаль эрĕмĕн çÿлти çулçисем симĕс, аялтисем шурăрах сăрă, хĕрлĕ кăвакрах туни туратлă. Ăна сулхăн та тĕттĕм вырăнта типĕтеççĕ, пир хутаçра 3 çул таран упранать.

Кĕпе-йĕм çумалли меслет

Ку меслетпе французсем усă кураççĕ. 10 л шыва вĕреме кĕрсенех çулăм çинчен илмелле те 1 стакан порошок, 2 апат кашăкĕ порошок евĕрлĕ шуратакан хатĕр (отбеливатель), 2 апат кашăкĕ тип çу, 2 апат кашăкĕ 9 процентлă уксус ямалла, лайăх пăтраштармалла. Унтан вырăн хатĕрĕсене ислетсе лартмалла (тĕрлĕ тĕслине те юрать, тĕсĕ тухмĕ). 15 минутран простыньсене пăрса кăлармалла, чÿхемелле, силлесе çакмалла.

Урай çăватпăр

Линолеума, кафеле тата сăрланă урайне ăшă шывпа, хушăран нашатырь е глицерин хушса çăваççĕ. Анчах та сода е супăнь хушма кирлĕ мар. Кирек епле урая та çăвиччен шăлмалла е пылесоспа тасатмалла.

УСĂЛЛĂ КАНАШСЕМ

- Япала çине лекнĕ тутăха тасатма ансат: таса мар вырăна марльăпа е типĕтмелли хутпа чĕркенĕ лимон касăкĕ хумалла та утюг лартса пусăрантармалла.
- Чăмлакпа (жевачка) вараланнă тумтире сивĕтмĕше хумалла. Кăшт вăхăт иртсен вăл хытать, тумтире кăлармалла та типĕтнĕ тăма силленĕ пек тасатмалла.
- Симĕс çимĕçе вăрах упрас тесен ăна çуса сарса типĕтмелле. Унтан кантăк савăта тултарса тачă хупмалла, сивĕтмĕше лартмалла.
- Тин сăрланă йывăç урайне уксус хушнă шывпа çăватăп, кунашкал вăл хăйĕн малтанхи тĕсне чылай вăхăт хушши çухатмасть.
- Сăрланă алăксене аялтан çÿлелле çума хушаççĕ, хыççăн кăшт нÿрĕ татăкпа лайăх сăтăрмалла.
- Куç кĕски йăлтăртатса тăтăр тесен ăна шыв хушнă чейпе е кăвак сăрă (синька) хушнă сивĕ шывпа сăтăрмалла.
- Çĕçĕсемпе вилкăсем йăлтăртатса тăччăр тесен вĕсене çĕр улми пĕçернĕ шыва ярса 10 минут вĕретĕр.
- Алăран кĕрекен сухан шăршине пĕтерес тесен алла шăл пастипе лайăх сăтăрăр. Унтан таса шывпа çуса ярăр.

ВУЛАКАН СĔНЕТ

Килтех сипленетпĕр

Чылай чир-чĕр паллине килти хатĕрсемпех иртерме пулать. Çемьере тĕрĕсленĕ рецептсене сĕнетпĕр.

Тута çине герпес тухсан çав вырăна темиçе пĕрчĕ апат тăварĕ хурăр. Çакна кунне темиçе хут тусан чир палли хăвăрт иртет.

Вар витти ерсен чĕрĕ çăмарта шурри пулăшать. Ăна сарринчен уйăрса ĕçмелле. Енчен те хăйне кăна ĕçме кăмăллă мар пулсан, 1 чей кашăкĕ «Биттнер» бальзам хушăр.

Хырăмлăх язвине сиплеме вăтам чĕрĕ çĕр улми илĕр, çăвăр. Хуппине шуратмасăрах терка çине аш арманĕ витĕр кăларăр, пĕтĕмпех çисе ярăр. Кунне пĕр хутчен выçварла çимелле. Çур сехет иртсен кăна шыв ĕçме, апат çиме юрать. Сиплев курсĕ – икĕ уйăх.

Арçыннăн ар шĕвеклĕх парĕн аденоминчен пĕрремĕш кунне пĕр пуç сухан çисе ямалла (шыçăр-мĕнсĕр). Иккĕмĕш кунне – çур стакан хĕвел çаврăнăш е кавăн тĕшши. Виççĕмĕш кунне – çур стакан аçтăрхан мăйăрĕ. Çаксене çапла черетлесе виçĕ уйăх çисе пурăнмалла. Ĕçме тата туртма пăрахмалла. Сухана, хĕвел çаврăнăшне тата мăйăра черетлесе çывăрас умĕн (каçхи апат хыççăн 2–3 сехетрен) çимелле. Сиплев курсĕ – виçĕ уйăх.

<u>Асăрхаттарни:</u> хырăмлăхпа пыршă чирĕсемпе чирлекенсемшĕн чĕрĕ сухан сиенлĕ.

Мастопатие сиплеме купăста çулçине пыл сĕрсе кăкăр çине хумалла. Çиелтен полиэтилен витсе ăшă тутăрпа çирĕплетмелле. 1–2 сехет тытмалла. Хыççăн кăкăра ăшă шывпа çуса ямалла.

Артритран 5–6 сантиметрлă 300–350 г çĕр улми калчи илмелле, аш арманĕ витĕр кăлармалла, 200 г одеколон («Тройной») ямалла. Тăтăшах силлесе тĕттĕм вырăнта 10 кун лартмалла. Сăрăхтармалла. Чирлĕ сыпăсене кунне 2–3 хутчен сĕрмелле.

Ÿтри шурă вырăнсене (витилиго) пĕтерме купăста кучанне вĕтĕ терка витĕр кăлармалла, сĕткенне сăрăхтармалла. Сиенленнĕ вырăнсене унпа кунне темиçе хутчен сĕрмелле. Çавăн пекех дыня ăшĕпе те усă курма юрать.

Дисбактериозран шăтарнă тулăна ирпе выçварла çимелле. Им-çампа чÿхемен тулла 2–3 сехетлĕхе ăшă шыва ямалла, унтан шывне тăкса нÿрĕ таса татăкпа витмелле, ăшă вырăна лартмалла. Талăк иртсен шăтма пуçланă тулла аш арманĕ витĕр кăларса çимелле. Тутă кĕме пыл е курага хушма юрать. Кунсеренех кĕвелĕк ĕçме тăрăшăр.

СĔТЕЛĔ ТУЛĂХ ПУЛТĂР

Кавăн компочĕ

Лайăх пиçсе çитнĕ кавăна тасатмалла, ăшне кăлармалла, вĕтĕ тăваткăлсене турамалла, 5–6 минут вĕри (90 градус) сахăр сиропĕнче (1 л шыва 500 г сахăр) тытмалла. Унтан кавăн татăкĕсене сиропран кăларса банкăна хумалла. Сиропа рецепт тăрăх сахăр ямалла, вĕреме кĕртмелле, лимон кислоти хушмалла та кавăн çине ямалла. Шыв мунчинче стерилизацилемелле: çур литрлисене – 15 минут, литрлисене –25 минут.

1 кг кавăн пуçне – 4 г лимон кислоти. Сироп валли: 1 л шыва – 700 г сахăр.

Пан улмипе кавăн нимĕрĕ

